# Юлашки тĕлпулу

**1943 çулхи кĕркунне Днепр юхан шывĕ урлă каçса Совет çарне малалла кайма унăн сылтăм çыранĕсенчи плацдарма çĕнсе илнĕ чух хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă çынсенчен пĕри – Алексей Романович Логинов лейтенант. «Совет Союзĕн Геройĕ» чыслă ята ăна пуçне хунă хыççăн панă. Логиновсен кун-çулне тĕпчесе Шупашкарти ĕлĕкхи тата хальхи вăхăтри истори архивĕсенче, Элĕкри литературăпа краеведени музейне, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Кушлавăшпа Упушкăнь ялĕсене çитсе куртăм.**

Çĕршывра граждан вăрçи пынă. Çар çулне çитнĕ çамрăксемпе вăйпитти арçынсем Совет влаçне хӳтĕлеме тухса кайнă. Кăрмăш уесне кĕрекен Штанаш салинче вырнаçнă Атай вулăс кооперативĕнче курьерта ĕçлекен пулман. Упушкăньри хресчен ачи Элекçи пушаннă вырăна йышăннă. Ашшĕн хуçалăхĕнче ака-сухара пиçнĕ çамрăка, вун улттăра çеç пулин те, çĕнĕ ĕç хăратман. Икĕ çул вулăс тăрăх лашапа çӳресе вырăсла лайăх калаçма тата хитре çырма пултарнăран ăна ĕçтăвкома ĕçлĕ хутсене куçарма йышăннă. Çапла виçĕ çул та иртсе кайнă. Выçлăх çулĕсем хыçа юлнă. Тивĕçсене вăхăтра тата типтерлĕ пурнăçлакан Алексей Логинова ĕçлĕ хутсене йĕркелесе пыма шаннă. Канцелярире ĕçлекенĕн пысăк мар шалăвĕ ашшĕне налук тӳлеме те çитсе пынă.

Ашшĕпе амăшĕ ăна авланма сĕннĕ. Çирĕм пĕр çулти каччă валли вĕсем хĕр те пăхса хунă. Пулас кинĕ хăйсем пекех нумай ачаллă Егор Васильевич Пахинов çемйинчен. Кил хуçи революциччен çил арманĕ тытнă, икĕ хутлă кирпĕч çуртра пурăннă. Совет влаçĕшĕн шанчăклă çын шутланман «кулак» ятне илнĕ вăтам хресчен 1921 çултах çĕре кĕнĕ. Хуçалăх терчĕ арăмĕпе ачисем çине тиеннĕ. Çавна май Елен хĕрĕ килĕнче ытлашши çăвар шутланман. Лутра пӳллĕ хĕрупраç ĕçчен, пăрчăкан пек вăр-вар пулнăран Элекçи ăна хăй те килĕштернĕ.

Чунĕсем пĕр-пĕрин патне туртăннипе каччăпа хĕр мăшăрланнă. Аслашшĕсен йăлипе ывăлне уйрăлса тухма Роман Степанович çĕнĕ шурă пӳрт лартса панă. Пурнăç улшăннă май çĕнĕлĕхсем вăя кĕрсе пынă. Республика, районсем туса хунă. Атай вулăсĕ хупăннă. Ял совечĕсенче суйлавсем иртнĕ. Алексей Романовича Упушкăнь ял совечĕн членĕ пулма суйланă. Хальхинче те ăна ĕçтăвком секретарĕн пуканне шанса панă, президиум йышне те кĕртнĕ.

1929 çулта пĕтĕмĕшле коллективизаци ирттерме тапратнă. Влаçăн çӳлти органĕсем ялсенче кулаксене тупса палăртса вĕсене «тымарĕпе кăкласа» аякка кăларса яма ирĕк панă. Суйлавăн иккĕмĕш созывĕнче А.Р.Логиновăн кандидатури те ял совечĕн членне тивĕçеймен. Ĕçтăвком секретарĕн пуканне те пушатма тивнĕ ăна. Вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче «халăх тăшманĕсене» айăплакан юхăм чĕрĕлсе ураланнă. Вăл Хĕрлĕ Чутай салине те пырса çапнă. Алексей Романович, районти шалти ĕçсен пайĕнче вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тупнăскер, ăна каллех çухатнă. Ялă таврăнса «Жнейка» колхозăн уй-хир бригадине тыр-пул туса илме явăçнă. Çемйи те пысăкланнă.

Тасату тапхăрĕн хумĕ кăштах йăвашлансан А.Р.Логинова районти халăх сучĕ хăйĕн йышне чĕнсе илнĕ. Суд ларăвĕсен протоколĕсене тĕрĕс шăрçалама право пĕлĕвĕ çитейменнине шута илсе Шупашкара, юристсен çулталăклăх шкулне, вĕренме янă.

Юрист пĕлĕвне илнĕскер саккунлăха çирĕплетекен ĕçне кӳленнĕ. Тĕп ĕçĕпе пĕрлех судпа прокуратура членĕсен профсоюзĕн пуçламăш организацине ертсе пырса районăн обществăлла пурнăçне çĕнетме тăрăшнă. Тăрăшулăхне хакласа юлташĕсем ăна 1939 çулта профсоюзсен облаçри конференцине хутшăнма делегата суйланă.

Çак çулах Алексей Романовича партие кĕме сĕнеççĕ. ВКП(б) парти райкомĕн бюровĕ Алексей Романовича халăх судйин çумĕ пулма çирĕплетнĕ. Часах ăна адвокатсен юлташлăхне куçарнă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçин пуçламăшĕнче халăх судйи çар трибуналĕн членĕ пулса тăнă. Çынсен шăпине тĕрĕс татса пама тăрăшнă вăл. Командирсен пĕлĕвне ӳстермелли виçĕ уйăхлăх курсра вĕренсе ăсталăх пухнă лейтенанта фронта, малти рете, яма палăртнă. Унччен çемйипе тĕл пулса курнăçма ултă кунлăх отпуск панă. Май уйăхĕнче ăна тăван ялĕ, çемйи кĕтсе илнĕ. Шутлă кунсем хăвăрт иртсе кайнă.

Алексей Романовича фронта ăсатма тăванĕсемпе пĕрле уй хапхине пĕтĕм ватăвĕтĕ тухнă. Юлашки тĕлпулу пулнă ку.

**Лев МЕДВЕДЕВ.**

# Кӳршĕсем: икĕ Зоя

**Ӳссе çитĕнсен, пĕр-пĕр яла качча тухсан хĕрсем арăм пулса тăраççĕ. Хальччен пĕр-пĕрне пĕлмен-палламан çынсемех кӳршĕллĕ пулаççĕ те тус-юлташланаççĕ.**

**Эпир сире Анат Çĕрпӳкасси ялĕнче юнашар пурăнакан Зоя Александровна Красновапа Зоя Кирилловна Димитриева пенсионеркăсен кун-çулĕпе кĕскен паллаштарасшăн.**





**Зоя Александровна** (хĕр чухнехи хушамачĕ Никитина) Акташ ялĕнчи хресчен çемйинче, 1938-мĕш çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ. Ашшĕ, Александр Никитич коммунист, «Большевик» колхоз председателĕ тата Хĕрлĕ Чутайри хатĕрлев кантурĕн директорĕ пулса ĕçленĕ. Амăшĕ, Анна Фадеевна, çак ял хĕрĕ пулнăскер, 5 ача çуратнă, çав хушăрах колхоз ĕçĕсенчен те юлман.

Гитлер хĕтĕртнипе унăн хĕçпăшаллă çарĕ пирĕн çĕр çине вăрçăпа кĕрсе кайсан, совет халăхĕ çĕршыва хӳтĕлеме çĕкленнĕ. Кашни çемьеренех арçынсем фронта тухса кайнă, çав шутра Никитин та. Килĕнче вара унăн арăмĕпе Николай, Агреппина, Виссарион, Зоя тата Витя ачисем юлнă.

Шел пулин те, хаяр вăрçă пысăк çухатусемсĕр иртмен: А.Н.Никитин пулеметчикăн пурнăçĕ, 1942-мĕш çулта Ржев хули çывăхĕнчи Кондраково ялĕшĕн пынă çапăçура татăлнă. Тискер хыпар ялти тата 35 салтак арăмĕпе ачине куççуль юхтарнă, анчах та вĕсем хуçăлса ӳкмен, пĕтĕм йывăрлăха çĕнтерсе пынă. Зоя, виç-тăват çултискер, ашшĕ вăрçа тухса кайнине çапах та астуса юлнă, çав самант халĕ те ун куçĕ умĕнчех.

Çичĕ çул вĕренмелли шкул хыççăн, 1954-1956-мĕш çулсенче, илемлĕ сăн-питлĕ хĕр «Большевик» колхозăн сурăх ферминче вăй хурать. Çав тапхăрта ял çамрăкĕсем Иваново облаçĕнчи торфкăларакан предприятине кайма хатĕрленеççĕ, Зоя та вĕсемпе пĕрле пуçтарăнать. Шăп çулталăк тар юхтарса ĕçленĕ хыççăн тăван ене таврăнать.

Çĕнĕ çул пуçламăшĕнче çирĕме çывхаракан Зоя Анат Çĕрпӳкассинчи Василий Красновăн мăшăрĕ пулса тăрать. Пĕр-пĕрне юратакан мăшăрăн икĕ хĕр çуралать, кил-çурчĕ те майĕпен çĕнелет. Упăшки мĕн виличченех ялти тимĕрçĕ лаççинче тата механизациленĕ арманта тăрмашать: вар-хырăм чирĕ унăн кун-çулне 70 çула çитиччен татать.

Зоя Александровна вара, 75 çулта пулин те, аптрамасть-ха: выльăх-чĕрлĕх усрать, сад-пахчара тăрмашать, пушă вăхăтра радио итлет, телевизорпа совет саманинчи фильмсене пăхма юратать. Унăн ĕç стажĕ 40 çул ытла. Тивĕçлĕ канăва тухиччен тăван колхоз ферминче пăру-вăкăр пăхнă, доярка та пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл «Районти чи лайăх выльăх пăхакан» (1974), «Коммунизмла ĕç ударникĕ» (1974, 1980, 1984), «Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи» (1978, 1980, 1983), «Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç ăсти» (1979, 1980) «Ĕç ветеранĕ» (1998) ятсене тивĕçнĕ. Ĕçри пысăк ӳсĕмшĕн ăна районти Хисеп кĕнекине кĕртнĕ, колхоз правленийĕ тăвата хут Хисеп грамотипе хаклă парнесем парса хавхалантарнă, ял çыннисем Кивĕ Атикасси ял Советне депутата суйласа (1980-1982) чысланă.

**Зоя Кирилловна** (хĕр чухнехи хушамачĕ Кириллова) Советски çывăхĕнчи (Етĕрне районĕ) Моляк ялĕнче 1939-мĕш çулхи февралĕн 27-мĕшĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ, Кирилл Григорьевич, вăрçăра пуç хунă. Тăлăха юлнă хĕрачана амăшĕ пĕччен пăхса çитĕнтерет. Советскинчи вăтам шкултан вĕренсе тухсан хĕр вырăнти çĕвĕ цехĕнче ĕçлет: илемлĕ тĕрĕсем тĕрлеме вĕренсе çитет. 1957-мĕш çулта тракторист-машинистсем хатĕрлекен профтехучилище уçăлсан унта вĕренме Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Анат Çĕрпӳкасси каччи Петр Дмитриев та пырать. Часах çамрăксем пĕр-пĕрне курса паллашаççĕ, вĕсен чĕрисенче юрату туйăмĕ вăй илет. Çамрăк арăм «Свобода» колхоз ферминче ĕçлеме тытăнать: 33 çул дояркăра тăрăшать. Ĕçри хастарлăхшăн ăна колхоз правленийĕпе райĕçтовкомăн ял хуçалăх управленийĕ Хисеп грамотисем, хаклă парнесем панă. Кунсăр пуçне вăл «Социализмла ĕç çĕнтерӳçи» (1975, 1977), «Выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕç ăсти» (1979), «Коммунизмла ĕç ударникĕ» (1984) тата «Ĕç ветеранĕ» (1996) ятсене те тивĕçнĕ.

Юратса чăмăртаннă çемье пуçлăхĕ те ĕççĕр ларман: «Беларуç» тракторпа колхоз ĕçĕсене пурнăçланă, пĕрлех кил таврашне çĕнетсе пынă, Германпа Глафира ачисене тĕрĕс воспитани парса ӳстерме тăрăшнă.

Халĕ Зоя Кирилловна та пĕчченех. Зоя Александровна кӳршипе пĕр-пĕрне килĕштерсе пурăнаççĕ вĕсем.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ.**
**Хĕрлĕ Чутай районĕ.**
**ӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:**
**Зоя Красновапа Зоя Димитриева çамрăк чухне.**

# Вăрманти хваттер

Хам пĕчĕк чухнех пулса иртнĕ çак ĕç-пуç, анчах халĕ те асран тухмасть. Вăрçă вăхăтĕнче пирĕншĕн, ачасемшĕн, тĕп апат вырăнĕнче курăк пулнă. Ут кăшкарĕ, чĕкеç кĕпçи, вырăс хуххи пире вилĕмрен çăлса хăварнă. Кăшлич текен курăка асăрханса çимен чухне тутасем те хăпарса тухатчĕç.

Пĕррехинче хырăм выççи мана вăрмана уттарчĕ. Питĕ çырла çиес килчĕ. Çапла çырла шыраса хам аташса кайнине те сисмен. Тавралăха каç сулнăкĕ çапнăччĕ ĕнтĕ. Çитменнине, хуп-хура çумăр пĕлĕчĕ хупласа килчĕ. Вăрман тĕттĕмленсех ларчĕ. Часах чуна çурмалла çиçĕм ялтăртатса илчĕ, тĕнчене ишсе аслати кĕмсĕртеттерчĕ. Сивĕ çумăр çума пуçларĕ. Çӳхе кĕпе самантрах лачкам пулчĕ. Хам ăçталла кайнине пĕлмесĕрех утатăп. Çамрăк хунавсем ураран çакланса такăнтараççĕ.

Умра – пысăк хура мелке. Хăра-хăра çывхартăм ун патне. Армак-чармак тымарĕсене тăратса выртакан лапсăркка чăрăш пулчĕ-тăчĕ хайхи.

Часах тымар айĕнчен нăйкăшнă ачаш сасăсем илтĕнчĕç. Сасă паракансем кунта хӳтлĕх тупнине туйса эпĕ те пĕшкĕнсе шалалла упаленсе кĕтĕм. Тĕттĕм пулсан та шăтăкра йытă çурисем пулнине ăнланса илтĕм. Кӳршĕри Ваççа тетесен Туçикĕ кунта килсе çăвăрланă пулĕ тесе шухăшларăм. Тăвата çура. Малтан пĕрне тытса юратрăм, унтан – теприне. Хайхисем йĕпе сăмсипе ман хĕвре темĕн шырама пуçларĕç.

Йытă çурисемпе выляса выртсах эпĕ, ывăннăскер, çывăрса кайнă. Тем вăхăт çывăрнă. Пĕлместĕп. Йытă вĕрнĕ сасăпа вăранса кайрăм.

– Туçик, Туçик, эсĕ килтĕн-им? – тесе çеç ĕлкĕртĕм, хайхи мана урари çăпатаран çыртса шăтăкран тулалла сĕтĕрсе кăларчĕ. Хăй çавăнтах çурисем патне шăтăка кĕрсе çухалчĕ.

Ку йытă Туçик маррине тавçăрса часрах кунтан аяккарах кайма тăрăшрăм. Хăранипе тата шăнса кайнипе сиксе чĕтретĕп. Часах тухăç енчен хĕвел хăпара пуçларĕ. Унăн ăшшипе каçхи çумăр йĕпетнĕ çырмаран тĕтре йăсăрланса хăпарма тытăнчĕ.

Манран та иртерех вăраннă улатакка çине тăрсах йывăçа таклаттарать. Çапла урлă-пирлĕ пăхкаласа тăнă вăхăтра çынсем кăшкăрнине илтрĕм. Эпĕ те хирĕç сасă патăм. Вĕсем татах кăшкăрчĕç. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, хама шырама тухнă çынсен ытамне кĕрсе ӳкрĕм. Анне те пурччĕ. Киле çитсен хам ăçта çĕр каçнине, йытă çурисене ачашланине каласа патăм. Анне мана шывланнă куçĕсене умĕнчи саппунĕпе шăла-шăла итлерĕ.

– Эх, ачам, пурăнас куну пурах пуль çав. Сана вăрманта кашкăр тавраш ĕ çисе янă пулсан тăр пĕччен тăрса юлаттăм вĕт. Аçу, ав, вăрçа кайрĕ те çухалчĕ, – терĕ Турра тав туса.

Çав кунах çынсем эпĕ çĕр каçнă шăтăкри çурасене илме кайрĕç. Анчах вĕсем пынă çĕре йăвара пĕри те пулман. Вĕсем тилĕ çурисем пулнă иккен. Амăшĕ çурасене урăх çĕре куçарса кайнă. Çын шăрши ан пултăр тенĕ курăнать. Çапла вара эпĕ хама çĕр каçарнă «хваттер» хуçисене тав сăмахĕ те калаймарăм.

**Иван ЕРОФЕЕВ.**
**Патăрьел районĕ,**
**Ишлĕ ялĕ.**